чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи январĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи февраль уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи августăн 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă



СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи март уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

224/26630/ № | Ытларикун, 2014, ноябрь/чӳк, 18 | Хакĕ ирĕклĕ | www.hypar.ru

ПĔТĔМ ТĔНЧЕ ТУРНИРĔ 2
Çитĕнӳ çулĕ такăр пултăр

ВĂРМАН 3
Парăма шыраттарса илетпĕр

ЧЫСЛАВ 4
Çеçпĕл вилĕмсĕрлĕхĕн вăрттăнлăхĕ

## Инвестици ытларах килтĕр

***ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин тунтикун Йошкар-Олара федерацин Атăлçи округĕнче инвестици климатне лайăхлатас, административлă чăрмавсене чакарас, пĕчĕк тата вăтам предпринимательлĕхе аталантарас енĕпе ĕçлекен комиссин Михаил Бабич полпред ертсе пынипе иртнĕ ларăвне хутшăннă.***

Комисси ĕçне çавăн пекех РФ Президенчĕ çумĕнчи предпринимательсен прависене хӳтĕлекен уполномоченнăй Борис Титов, Çĕнĕ проектсене пурнăçламалли стратеги пуçарăвĕсен агентствин гендиректорĕ Андрей Никитин, Патшалăх Думин Экономика политики енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ Игорь Руденский, регионсенчи предпринимательсен прависене хӳтĕлекен уполномоченнăйсем, бизнес-пĕрлĕх представителĕсем, ыттисем хутшăннă.

Кун йĕркинче РФ Президенчĕн Раççей субъекчĕсен инвестици илĕртӳлĕхне çĕклемелли, бизнес валли лайăх условисем йĕркелемелли хушăвĕсене пурнăçлассипе, регионсен инвестици климачĕн наци рейтингне хатĕрлессипе, округри регионсем ăнăçлă практикăсен пуххипе пилот мелĕпе усă курассипе çыхăннă ыйтусем пулнă. Ларăва хутшăннисем çавăн пекех округри инвестици уполномоченнăйĕн 2014 çулхи ĕçĕ çинчен калакан отчета итленĕ.

**Н.ЯКОВЛЕВ.**

## Кивĕ çуртсенчен – çĕннисене

***Ноябрĕн 15-мĕшĕнче ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин республикăри муниципалитет районĕсен тата хула округĕсен администрацийĕсен пуçлăхĕсемпе видеоконференци мелĕпе канашлу ирттернĕ.***

Республикăн 2013-2017 çулсенче «Граждансене Чăваш Республикин территорийĕнче вырнаçнă ишĕлме пултаракан пурăнмалли çурт-йĕр фондĕнчен куçарасси» адреслă программине мĕнле пурнăçлани çинчен ЧР строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Сергей Безруков пĕлтернĕ.

Тăлăхсене тата ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр юлнă ачасене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтерес ыйтăва пăхса тухнă. Сергей Безруков пĕлтернĕ тăрăх – кăçал тăлăхсене çурт-йĕрпе тивĕçтерме 331,6 млн тенкĕ уйăрнă. Паянхи кун тĕлне 248 тăлăх валли хваттер /çурт/ тунă /туяннă/. Çĕнĕ Шупашкарта пурăнмалли çурт-йĕр туянма килĕшӳсем тăвассине япăх йĕркеленĕ – тăлăх 6 ача валли, Красноармейски районĕ пирки те çавнах каламалла – 3 ача валли. Йĕпреç /11 ача валли/ тата Шупашкар /1 тăлăх валли/ районĕсенче çурт-йĕр тума палăртнă вăхăтсене пăхăнман, контрактсене туллин пурнăçламан. Ноябрь вĕçлениччен федераци бюджечĕн укçи-тенкипе усă курма, çурт-йĕр туянмалли аукционсем йĕркелессине кĕске вăхăтра вĕçлеме, муниципалитет килĕшĕвĕсене вăхăтра пурнăçлассине тивĕçтерме тĕллев лартнă.

ЧР ял хуçалăх министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Алексей Самаркин ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ, усă курман çĕрсене çаврăнăша кĕртнине пĕлтернĕ, кăçал ку цифра 8960,4 гектарпа танлашать.

ЧР Конкуренци политики тата тарифсем енĕпе ĕçлекен патшалăх службин ертӳçи Альбина Егорова 2015 çула Чăваш Республикин муниципалитет йĕркеленĕвĕсенче граждансем коммуналлă пулăшусемшĕн хывакан тӳлев виçин улшăнăвĕсен индексĕсем çинчен пĕлтернĕ.

2015 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа июнĕн 30-мĕшĕччен пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх тарифĕсем 2014 çулхи декабрь шайĕнче юлаççĕ. Çулталăкăн II çурринче шывпа тивĕçтернĕшĕн тата шыв юхтарса кăларнăшăн тӳлев 12,2% таран ӳсме пултарать, ăшăпа тата электроэнергипе тивĕçтересси – 8,8%, газпа тивĕçтересси – 7,5%.

**А.ЛЬВОВА**

ХАК

# Кĕркунне сутлăх сĕт пĕлтĕрхинчен мĕншĕн йӳнелчĕ?

### Хресчене çак ыйту канăç памасть



Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăнӳкерчĕкĕ

«Агро-Инновацисем» ХП пĕлтернĕ тăрăх – тирпейлекен предприятисем кашни килограмм сĕте /1-мĕш сорт/ кăçалхи ноябрĕн 6-мĕшĕ тĕлне 19,1 тенкĕлле /пĕлтĕрхи ноябрĕн 7-мĕшĕнче – 19,68/ йышăннă. Продукци паракансене кашни литр сĕтшĕн июльте – 1,73, августра 0,69 тенкĕ нумайрах, сентябрьте – 28, октябрьте 82 пус сахалрах тӳленĕ. Сентябрьтен пуçласа килти хуçалăхсен продукцине пĕлтĕрхинчен йӳнĕрех хаклама тытăннă. Сĕт завочĕсем те, коммерсантсем те сăлтавне ăнлантармаççĕ. Ял-йыш тарăхать, иртнĕ çулхи хакран чакас марччĕ тет.

Октябрĕн 31-мĕшĕнче сутлăх сĕтĕн /1-мĕш сорт/ вăтам хакĕ Ульяновск облаçĕнче – 19,75, Самар облаçĕнче – 18,3, Чăваш Енре – 18,24, Тутарстанра – 18,01, Чулхула облаçĕнче – 18, Мари Элре – 17,25, Киров облаçĕнче 16,15 тенкĕ пулнă. Танлаштаруран ЧР виççĕмĕш вырăнта пулнине пĕлетпĕр. Вăл сентябрьте те çав пусма çинчех тăнă. Ку аван кăтарту.

Район администрацийĕсенчен пĕлтернĕ тăрăх – октябрĕн 31-мĕшĕ тĕлне килти хуçалăхран пухнă сĕтĕн сутлăх хакĕ районсенче çапла йĕркеленнĕ: Улатăр – 13-15, Элĕк – 17, Патăрьел – 14,5-16, Вăрнар – 16-16,5, Йĕпреç – 16-17, Канаш, Хĕрлĕ Чутай, Красноармейски, Вăрмар, Етĕрне, Муркаш – 16, Куславкка – 15, Комсомольски – 14,5-15, Сĕнтĕрвăрри, Çĕмĕрле, Шупашкар районĕ – 15-16, Пăрачкав – 15-17, Çĕрпӳ – 14-17, Шăмăршă – 15-23, Елчĕк – 15-15,5.

Тирпейлекен предприятисем тата килти хуçалăхсенчен продукци пуçтаракан организацисем лартакан хак пĕрешкел маррине ял çыннисем лайăх пĕлеççĕ. Пурте тупăш илес тĕллевпе килти хуçалăхсене сахалрах тӳлесшĕн.

Ял çыннисем сутлăх сĕт хакне ӳстерес тĕлĕшпе республика Пуçлăхĕ М.Игнатьев кăçал ырă витĕм кӳнине çирĕплетеççĕ. «Чăн сăмахăн суйи çук», – теççĕ халăхра. Вăл çулталăк пуçламăшĕнче ирттернĕ кашни тĕлпулура, каярахпа уйăхсерен йĕркеленĕ пухуканашлура вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенчен килти хуçалăхран пуçтаракан сутлăх сĕт хакне ӳстерессишĕн тăрăшма чĕнсе каларĕ. Унăн сăмахĕсем çилпе вĕçмерĕç. Тирпейлекен предприятисем 1-мĕш сортлă сĕте мартра пĕлтĕрхи çав уйăхринчен – 7,15, апрельте – 6,34, майра – 5,17, июньте 3,16 тенкĕ хаклăрах йышăннă. Çапах та продукци паракансем çĕклекен ыйтăва тепĕр хут лартас килет: сентябрьтен пуçласа килти хуçалăхран пухакан сутлăх сĕт хакĕ мĕншĕн йӳнелме пуçларĕ? Ыйту хуравне çитес номерсенче уçăмлатма тăрăшăпăр.

●➡ 2 стр.

## Право пулăшăвĕн кунĕ

***Ноябрĕн 20-мĕшĕнче Чăваш Енре Ачасене право пулăшăвĕ памалли кун пулать. Çак кун республикăри мĕн пур хулапа районта юстици тата шалти ĕçсен органĕсем, ЧР Ачасен прависемпе ĕçлекен уполномоченнăйĕ, патшалăх влаçĕн тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем, нотариуссемпе адвокатсем, Раççей Юристсен ассоциацийĕн Чăваш регион уйрăмĕ, вĕренӳ организацийĕсем тата коммерципе çыхăнман ытти тытăм хутшăннипе анлă мероприятисем иртĕç.***

РФ Президенчĕн йышăну пӳлĕмĕнче Раççей Юстминĕн Чăваш Енри управленийĕн пуçлăхĕ Д.М.Сержантов граждансене ачасен прависемпе интересĕсене хӳтĕлессипе çыхăннă ыйтусемпе йышăнĕ, тĕлпулусене адвокатсемпе нотариуссен пĕрлĕхĕн, социаллă хӳтлĕх, опека органĕсене явăçтараççĕ. Йышăну çак адреспа иртет: Шупашкар хули, Ленинград урамĕ, 36 çурт /Нумай функциллĕ центр/ – 13-рен пуçласа 15 сехетчен. /8352/ 62-22-33, 62-22-55 телефонсемпе шăнкăравласа малтанах çырăнма пулать.

Ачасен прависемпе, опекăпа, ачасемпе ашшĕ-амăшĕн хутшăнăвĕсемпе çыхăннă ыйтусемпе ĕçлекен тӳлевсĕр юридици консультацийĕн пункчĕсене çавăн пекех вĕренӳ учрежденийĕсенче, ача çурчĕсенче, çул çитменнисен социаллă реабилитаци центрĕсенче, çынсене йышăнмалли пӳлĕмсенче, МФЦра йĕркелеççĕ. Тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕсĕр пуçне çак кун ачасемпе ашшĕ-амăшне право пĕлĕвĕ памалли семинарсем, лекцисем, «çавра сĕтелсем» пулаççĕ.

Кăмăл пуррисене пурне те çак мероприятисене хутшăнма чĕнеççĕ. Республикăра Право пулăшăвĕн кунне йĕркелемелли планпа Раççей Юстминĕн Чăваш Енри управленийĕн сайтĕнче /to21.minjust.ru/, Чăваш Республикин влаç органĕсен официаллă порталĕнче, çавăн пекех Право пулăшăвĕн кунне хутшăнакан мĕнпур органпа организаци сайтĕнче паллашма пулать.

**Н.АНДРЕЕВ.**

КУН хыççăн КУН
☎ 56-04-26, 28-82-91

## Унпа мăнаçланаççĕ

***Кӳкеçри «Бичурин тата хальхи пурнăç» музейра «Шупашкар районĕн спорт мăнаçĕ» курав уçăлнă. Куракансене кире пуканĕ йăтас енĕпе спорт мастерĕн Анатолий Павловăн нумай медальлĕ хĕрлĕ хăйăвĕ тыткăна илет.***



Нумаях пулмасть Шупашкар районĕнчи Çĕньялта пурăнакан спорт ветеранĕ 75 çул тултарнă. Ĕç биографине вăл Кемĕр облаçĕнчи Прокопьевск хулинчи шахтăра пуçланă. Шăпах çавăн чухне Анатолий спортпа туслашнă. 1973 çулта вăл пăт пуканне çĕклеме пуçланă. Шахтерсен хушшинче ирттерекен кашни ăмăртăвах хутшăннă. Шахтăра 17 çул ĕçленĕ хыççăн тăван тăрăха таврăннă. Борис Глинкин тренер хавхалантарса пынипе вăл пĕрре кăна мар Чăваш Ен тата Раççей чемпионĕ пулнă. 1993 çулта 24 килограмлă кире пуканне сылтăм тата сулахай алăпа черетленсе йăтса (пĕр сехетре ăна вăл 857 хут çĕкленĕ) тĕнче рекордсменĕ пулнă. Ветеранăн ывăлĕсем те спортпа туслă. Максим – тухăç кĕрешĕвĕсем енĕпе спорт мастерĕн кандидачĕ, Александр çăмăл атлетикăпа кăсăкланать. Паян Анатолий Павловăн пухмачĕнче 40 ытла медаль, çавăн чухлех – кубок, 130 ытла Хисеп хучĕ, дипломсем.

**А.ГРОМОВА.**

## Куравпа пин ытла çын паллашнă

***Красноармейски салинчи тавра пĕлӳ музейĕнче «Асамлă тĕрĕ-çĕвĕ тĕнчинче ăсталанă Трак ен çи-пуçĕ» алăстисен куравĕ уçăлнă. Ăна Культура çулталăкне халалланă. Кунта асатте-асаннесен, кукаçи-кукамисен авалхи çи-пуçĕнчен пуçласа паянхи илемлĕ туммир таранах паллашма пулать.***

Кашни япали – пысăк пуянлăх. Экспозицире – хĕрарăм тата арçын кĕписем, сурпан-масмак, чĕнтĕрлесе капăрлатнă вырăн хатĕрĕсем, хура халат, шурă шупăр, кĕрӳ минтерĕ, минтер пичĕ, çыхнă тутăрсемпе кофтăсем, пит тата алă шăллисемпе алă тутрисем... Çавăн пекех выставкăра вĕтĕ шăрçапа тĕрленĕ ĕçсем те вырăн тупнă.

«Заволжски» клубĕ çумĕнчи «Алăсти» кружока çӳрекенсем курава пурĕ 116 ĕç тăратнă. Кунта Наталья Ефимова, Лариса Артемьева, Светлана Суховетрюк, Елена Тюмерова, Наталья Ильина, Антонина Леонтьева тата ыттисен тĕррисемпе киленме пулать. Вĕсене хавхалантарса пыраканĕ, асăннă кружок ертӳçи – ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Жанна Михайлова. Аваллăх управçин ĕçченĕ Валентина Тихонова куракансене ăшшăн кĕтсе илет, экспонатсемпе тĕплĕн паллаштарать. Курав уçăлнăранпа музейра пин ытла çын пулса курнă ĕнтĕ.

**С.ИВАНОВА.**

## Уява сумлăн ирттернĕ

***Иртнĕ канмалли кунсенче Шупашкарта Самбо кунне паллă тунă. 76 çул каялла никĕсленнĕ спорт çак тĕсĕн кунне Раççейре 2008 çултанпа уявлаççĕ. Самбон çавра çулне кăçал Чăваш Енре те сумлăн ирттернĕ.***

Самбо керменĕнче (Ухсай Яккăвĕ ячĕллĕ культура керменĕнче) йĕркеленĕ пысăк уявра ентешсене Пĕтĕм Раççейри тата Европăри федерацийĕн ертӳçи Сергей Елисеев, «Самбо-70» спортпа вĕренӳ центрĕн директорĕ Ренат Лайшев, ЧР самбо федерацийĕн президенчĕ Евгений Селиванов тата ыттисем саламланă, чи пултаруллисене парнесемпе чысланă. Уяв хыççăн хăнасем республикăри спорт шкулĕсен тата пĕлӳ çурчĕсен ертӳçисемпе вĕренӳ учрежденийĕсенче ятарлă секцисем уçасси çинчен калаçнă. Çав кунах çамрăк самбистсем ЧР Пуçлăхĕн Михаил Игнатьевăн кубокне çĕнсе илессишĕн Пĕтĕм Раççейри турнирта вăй виçнĕ. Ăмăртура Чăваш Ен спортсменĕсем пухмача 10 медальпе пуянлатса тĕп парнене тивĕçнĕ. Хăйсен виçисенче Олег Петров, Кирилл Маркин, Дмитрий Петров, Кирилл Михайлов тата ыттисем уйрăмах маттур пулнă.

**А.МИХАЙЛОВ.**

## Фильм – террора хирĕç

***Терроризм – этемлĕх умне тухса тăнă чи пысăк хăрушлăхсенчен пĕри. Террористсем – камсем вĕсем, тĕллевĕсем мĕнлерех? Пусмăр идеологийĕн тыткăнне камсем лекеççĕ – ислам мĕне вĕрентет? Террорăн хăрушă вăрçинчен пире кам хӳтĕлĕ?***

Эксклюзивлă интервьюсем, политиксен, психологсен, экспертсен, террористсемпе кĕрешекенсен подразделенисен ветеранĕсен, тĕн çыннисен шухăшĕсем, ятарлă службăсен оперативлă ӳкерĕвĕсем – çаксене пĕтĕмпех Владимир Машков хутшăннипе ӳкернĕ документлă фильмсен 12 сериллĕ ярăмĕнче пăхăр. Вăл ноябрĕн 17-28-мĕшĕсенче куллен 23 сехет те 30 минутра «Раççей 24» телеканалпа экран çине тухĕ.

**Д.ВОЛКОВ.**

### Çанталăк çинчен

Паян уяр çанталăк пулать. Çил анăçран 2 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 5, çĕрле 8 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 768 мм, сывлăшри нӳрĕк 58 процент.

**Кун тăршшĕ 8 сехет те 4 минут.**

Ыран уяр çанталăк пулать. Çил анăçран 4 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 4, çĕрле 4 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 766 мм, сывлăшри нӳрĕк 62 процент.

**Кун тăршшĕ 8 сехет те 1 минут.**

ПУÇАРУ

# Паттăр ентешсен ячĕпе – палăк

### «Чăваш Ене, Крыма тата Севастополе пулăшакан коммерцисĕр ĕçтешлĕхпе» Чăваш Республикинчи çар комиссариачĕ республикăра пурăнакансене, организацисене, учреждениcемпе предприятисене чĕнсе калани

***Совет çарĕсем 1944 çулта Крыма ирĕке кăларнă чухне Балаклава хулине те нимĕç тата румын захватчикĕсенчен тасатнă. Севастополе фашистсенчен пĕтĕмпех хăтариччен виçĕ эрне, Аслă Çĕнтерӳччен çулталăк ытларах юлнă.***

Чăваш Республикин территорийĕ пысăках мар. Çĕршыв картти çинче ăна ытти регионсен хушшинче асăрхаймастăн та. Çапах та чăваш халăхĕн Тăван çĕршывăн никама пăхăнманлăхĕшĕн пынă вăрçăри тӳпи çав тери пысăк.

Балаклава тата Севастополь хулисене ирĕке кăларнă чухне пирĕн ентешсем те паттăрлăхпа палăрнă. Чăваш Енĕн 70 ытла çар çыннине – офицера, сержантпа салтака – Севастополь Герой-хулин «Астăвăм кĕнекине» кĕртнĕ. Вăл йышра – Элĕк районĕнче 1915 çулта çуралнă Мирон Ефимов та. Мирон Ефимович 1939 çулта Ельскри авиаци училищинчен вĕренсе тухнă. Севастополь хулине хӳтĕленĕ чухнехи паттăрлăхпа хăюлăхшăн 1942 çулхи июнĕн 14-мĕшĕнче ăна Совет Союзĕн Геройĕн ятне панă. Каярахпа – Тинĕс-çар флочĕн авиацийĕн аслă инспекторĕ, гварди полковник. Мускавра пурăннă.

Пăрачкав районĕнчи Сиява салинче çут тĕнчене килнĕ Михаил Павлович Бочкарев вице-адмирал кăçал 95 çул тултарчĕ. Севастопольте пурăнать. Раççей Федерацийĕн Правительствин Председателĕ Дмитрий Медведев шăпах ăна Раççей паспортне чи малтан пачĕ. Хальхи вăхăтра Крымра 4500 чăваш тĕпленнĕ.

2014 çулхи апрелĕн 18-мĕшĕнче, Балаклава тата Севастополь хулисене ирĕке кăларнăранпа 70 çул çитсен, «Чăваш Ене, Крыма тата Севастополе пулăшакан коммерцисĕр ĕçтешлĕх» Чăваш Республикинчи çар комиссариачĕпе пĕрле Чăваш Ен делегацине Балаклава хулине кайма çулçӳрев йĕркеленĕ. Делегаци Балаклава хулинче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çапăçса пуç хунă салтаксен палăкĕ умне чĕрĕ чечексем хунă, хулана ирĕке кăларнăранпа 70 çул çитнине халалланă парада хутшăннă. Балаклавăра 2015 çулхи май уйăхĕн 9-мĕшĕнче, Çĕнтерӳ кунĕнче, Чăваш Республикинче çуралса ӳснĕ, асăннă хулана нимĕç-румын фашисчĕсенчен ирĕке кăларнă чухне паттăрсен вилĕмĕпе пуç хунă 56 ентеш ячĕпе палăк уçма палăртнă. Çак тĕллеве пурнăçлама – палăка хатĕрлеме тата вырнаçтарма – укçа-тенкĕпе пулăшма ыйтатпăр. Ăна «Кузнецкий» банк» АУО реквизичĕпе куçармалла:

Номер лицензии: 609
Корреспондентский счет:
30101810200000000707 в ГРКЦ ГУ Банка России по Пензенской области
Расчетный счет
№ 40703810600160000004
БИК: 045655707 ОКПО: 09309839
ОКВЭД: 65.12 ОГРН: 1125800000094
ИНН: 5836900162 КПП: 583601001
Наименование платежа: Память

**А.МОКРУШИН,**
**Чăваш Республикин çар комиссарĕ.**
**Ю.АЛЕКСЕЕВ,**
**«Чăваш Ене, Крыма тата Севастополе пулăшакан коммерцисĕр ĕçтешлĕх» ертӳçи.**

ПĔТĔМ ТĔНЧЕ ТУРНИРĔ

# Çитĕнӳ çулĕ такăр пултăр

## Çĕнĕ Шупашкарта ЧР Пуçлăхĕн парнисемшĕн тупăшрĕç

***Чăваш Ен çĕршыври ирĕклĕ мелпе кĕрешекен хĕрарăмсен тĕп центрĕ пулса тăчĕ. Пирĕн республика ытти регионсенчен чи малтан спортăн çак тĕсне аталантарма пуçланă. Чăваш çĕрĕ çинче çунат сарса çĕкленнĕ паллă спортсменсем Ольгăпа Наталья Смирновăсем, Наталья Гольц тĕнчере пысăк ят-сум çĕнсе илчĕç. Вĕсем никĕсленĕ çитĕнӳ çулĕпе паянхи кун Екатерина Краснова, Надежда Федорова, Вероника Чумикова тата ыттисем çирĕппĕн утаççĕ, тĕрлĕ шайри ăмăртусенче çĕнтерӳсемпе савăнтараççĕ.***



### *Пирĕн республикăра кĕрешӳ центрĕ уçăлчĕ*

Хĕрарăмсен кĕрешĕвне аталантаракан центр сентябрь уйăхĕнчех ĕçлеме тытăннă, вăл Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă 3-мĕш спорт шкулĕнче вырнаçнă. Хальхи вăхăтра унта виçĕ ушкăн пухнă. Вĕсене РФ спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ, Олимп вăййисен призерĕ Ольга Смирнова, спортăн тĕнче класлă мастерĕ, Европа чемпионачĕн призерĕ Наталья Смирнова тата çамрăк тренер Николай Кириллов хăйсен хӳттине илнĕ. Центрта хĕрсене ăсталăха туптамашкăн кĕрешӳ залĕ пур, тренировка ирттермешкĕн виçĕ кавир сарнă. Çавăн пекех кунта хăна çурчĕ, бассейн, тренажер залĕ, çăмăл атлетика манежĕ пур. Центрта 150 спортсмен хатĕрлеме пултарĕ. Унтах Чăваш Енĕн пĕрлештернĕ команди сборсем ирттерет, малашне федерацин Атăлçи округĕн спортсменĕсем те тренировкăсене килĕç. "Пирĕн хĕрсен спортра малашлăх пысăк. Мĕншĕн тесен вĕсем ĕçчен те пултаруллă, хастар та тăрăшуллă. Тренерĕсем çамрăк пулин те шанчăклă. Ирĕклĕ мелпе кĕрешекен спортсменсене Чăваш Ен Правительстви те, федераци те, РФ спорт министерстви те пулăшать", – тенĕччĕ ЧР физкультурăпа спорт министрĕ Сергей Мельников.

Çĕнĕ Шупашкарта ирĕклĕ мелпе кĕрешекен хĕрарăмсен хушшинче çĕршыв турнирĕсем ирттересси йăлана кĕчĕ. Кăçалхи çуркунне Раççей чемпионачĕ иртрĕ, 2013 çулта çĕршыв кубокне çĕнсе илессишĕн тупăшнăччĕ. Нумаях пулмасть 39 регионти çамрăк хĕрсем /пурĕ 260 çын/ Раççейре мала тухассишĕн иртнĕ ăмăртура вăй виçрĕç. Пирĕн пикесем пухмача 5 "ылтăнпа", 1 "кĕмĕлпе" тата 5 "бронзăпа" пуянлатрĕç. Чи сумлă наградăсене Надежда Матвеева, Екатерина Михайлова, Ирина Алексеева, Евгения Захарченко, Ирина Николаева çĕнсе илчĕç. Йĕркелӳçĕсем Екатерина Михайловăна "Техника енĕпе чи лайăххи" номинацире кубокпа чысларĕç, ăмăртăвăн пилĕк çĕнтерӳçине хатĕрленĕшĕн Ольга Смирнова "Чи лайăх тренер" ята тивĕçрĕ.

Сăмах май, ноябрь уйăхĕн пуçламăшĕнче пирĕн хĕрсем Надежда Федоровăпа Екатерина Краснова тăван ене Мускавра иртнĕ Европа нацийĕсен кубокĕнчен пысăк парнепе таврăнчĕç. Командăсен хушшинче йĕркеленĕ турнирăн финалĕнче Раççей хĕрĕсем Азербайджан спортсменкисене 8:0 шутпа парăнтарса тĕп наградăна çĕнсе илнĕ.

### *Пьедестал çинче – чи вăйлисем*

Çак кунсенчех ирĕклĕ мелпе кĕрешекен хĕрарăмсем Олимп резервĕсен ятарлă 3-мĕш спорт шкулне Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Михаил Игнатьевăн парнисене çĕнсе илессишĕн Пĕтĕм тĕнчери "Раççей кубокĕ" турнира пухăнчĕç. Пĕр кун маларах иртнĕ пресс-конференцире Раççейĕн пĕрлештернĕ командин тĕп тренерĕ Юрий Шахмурадов каланă тăрăх – ку ăмăртăва малашне уйрăммăн йĕркелеме палăртаççĕ. Вăл Красноярск крайĕнче иртекен Иван Ярыгин гран-прийĕ евĕр тĕнче турнирĕн статусне илĕ. Раççейри чи пысăк ăмăртусенчен пĕри пулмаллине те пĕлтернĕ хăна. Йăлана кĕнĕ тăрăх унта чи вăйлă спортсменсем хутшăнĕç.

"Раççей кубокĕ" турнира килнисене ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин, РФ кĕрешӳ федерацийĕн вице-президенчĕ Омар Муртузалиев, РФ спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ, Олимп вăййисен призерĕ Алена Карташова, Çĕнĕ Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ Олег Бирюков тата ыттисем саламларĕç. "Паянхи уяв çĕршыв спорчĕн кун-çулне çырăнса юлать, мĕншĕн тесен хĕрарăмсен кĕрешĕвне аталантармашкăн Раççейри пĕрремĕш центр уçăлчĕ. Ку пирĕншĕн питĕ пĕлтерĕшлĕ пулăм. Спорта аталантарас тĕлĕшпе чылай ĕç тунăшăн ЧР Пуçлăхне чунтан тав тăватăп. Малашне те пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесчĕ. Чăваш Ен – тĕнчипе паллă спортсменсен тăрăхĕ. Ирĕклĕ мелпе кĕрешекен хĕрсен йышĕнче те Олимп пьедесталĕ çине хăпаракан çитĕнтерессе шанатăп. Кунта çыннисем те ăшă кăмăллă та пултаруллă, кашнине тараватă кĕтсе илеççĕ. Çавăнпа килмессерен ырă ĕмĕт-шухăшпа çунатланса каятăп", – терĕ Омар Муртузалиев.

Ку хутĕнче вара çĕнĕ стартра çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен килсе çитнĕ 22 команда вăй виçрĕ. Раççей кубокĕнче Крым Республикин спортсменĕсем те пĕрремĕш утăмĕсене турĕç. АПШ, Австри, Молдова, Казахстан, Монголи кĕрешӳçисем те Чăваш Енре иртекен ăмăртуран юлман. АПШ команди уйрăмах йышлă пулнине палăртмалла: пурĕ 15 çын. Чи сумлисем – Олимп вăййисен призерĕсем Кларисса Чунпа Ренди Миллер. Кубокра вĕсем пилĕк награда çĕнсе илчĕç.

Пирĕн республика чысне унта 10 спортсмен хӳтĕлерĕ. Пуринчен ытларах Европа тата тĕнче чемпионачĕсен чи вăйлă кĕрешӳçи Наталья Гольц /тренерĕ – Наталья Смирнова/ палăрчĕ: 60 килограмлă хĕрарăмсен ушкăнĕнче тĕп парнене тивĕçрĕ. "Тăван енре çĕнсе илнĕ пĕрремĕш награда ку маншăн. Çапах та килте иртекен ăмăртусенче тупăшма йывăртарах. Кунта питĕ пысăк яваплăх: медальсĕр юлсан пит хĕрелет. Тăван стенасем пулăшаççĕ тени тĕрĕсех иккен. Паян мана ăнчĕ, пĕрремĕш утăмсем тăвакан ача пекех савăнатăп", – пĕлтерчĕ çĕнтерӳçĕ. 55 килограмлă виçере те пирĕн хĕрсем медальсĕр юлмарĕç. Канаш районĕнчи Шăхасан пики Вероника Чумикова виççĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Олимп резервĕсен училищинче вĕренекен 20-ри студентка Ольга Смирнова патĕнче ăсталăха туптать. Кăçал вăл тепĕр икĕ ăмăртуран – Раççей юниорĕсен чемпионатĕнчен тата "Иван Ярыгин гран-прийĕ" турниртан – медальсемпе таврăннă. Ăмăртăвăн иккĕмĕш кунĕнче Хусанти Универсида призерĕ, Европа чемпионки Екатерина Краснова савăнтарчĕ. 53 килограмлисен ушкăнĕнче пьедесталăн пĕрремĕш картлашки çине хăпарчĕ.

■ **Андрей МИХАЙЛОВ**

# Музыка инструменчĕсем панă

***Республикăра «Чăваш Енри пултаруллă ачасем» фестиваль иртнĕ май ноябрĕн 14-мĕшĕнче ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин Чăваш патшалăх культурăпа искусство институтĕнче ачасен искусство тата музыка шкулĕсене музыка инструменчĕсем илмелли сертификатсем панă.***

ЧР Пуçлăхĕн Михаил Игнатьевăн пуçарăвĕпе Культура çулталăкĕнче республика бюджетĕнчен шкулсем валли музыка инструменчĕсем туянма 2 млн та 481 пин тенкĕ уйăрнă. Раççей Культура министерствинчен те çавăн чухлех параççĕ.

Çапла вара юлашки 20 çулта пуçласа Чăваш Енри ачасен музыка, искусство шкулĕсем паха тата хаклă йышши çĕнĕ 100 инструмент илнĕ. Шкулсем фортепьянăпа, балалайкăпа, тăмрапа, сĕрме купăспа, аккордеонпа, баянпа пуянланнă.

Иван Моторин премьер форума хутшăннисене республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ячĕпе ăнăçлă ĕçлеме, пултарулăхра ăнăçусем суннă. Вăл палăртнă тăрăх – ку пĕр хут ирттерекен акци мар, республика Правительстви хушма пĕлӳ паракан шкулсен пурлăхпа техника никĕсне çĕнетме малашне те пулăшĕ.

Каласа хăвармалла: республикăри пултаруллă ачасене пулăшма, професси, пултарулăх тĕлĕшĕнчен малалла ӳсме хушма условисем йĕркелес тĕлĕшпе Чăваш Ен Пуçлăхĕ çамрăксене /ача-пăча искусство шкулĕсен вĕренекенĕсене, студентсене тата специалистсене/ кашни çулах стипенди парса тăрать. Хăш-пĕр хулапа район администрацийĕ те талантлă ачасене пурлăх енĕпе пулăшать.

Чăваш Енре культурăпа искусство сферинче муниципалитетсен ачасен хушма пĕлӳ паракан 46 шкулĕ ĕçлет. Чăваш Енри çамрăк талантсем Раççей тата тĕнче шайĕнчи конкурссемпе фестивальсенче кашни çулах пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ.

■ **А.ВАСИЛЬЕВА**

# Кĕркунне сутлăх сĕт пĕлтĕрхинчен мĕншĕн йӳнелчĕ?

*/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.*

**Евстолия АРТЕМЬЕВА, Етĕрне районĕ, Пушкăрт ялĕ:**

– Манăн çемье /упăшка, ывăл, кин, мăнуксем/ 4 ĕне усрать, сĕт сутса тупăш тăвать. Услам нумай мар. Фельдшер-акушер пунктĕнче ĕçлесе пĕчĕк шалу илекен кин, штата пĕчĕклетнĕрен ветеринари врачĕнчен кайма тивнĕ ывăл ĕнесенчен усă ытларах курасшăн. Вĕсене старикпе иксĕмĕр пулăшатпăр. Пирĕн яла Ирçерен килекен коммерсант кашни литр сĕте 16 тенкĕлле, çулталăк каяллахинчен пĕр тенкĕ йӳнĕрех, йышăнать. Çулла темиçе тенкĕ сахалрах тӳлерĕ. "Сăлтавĕ манра мар, Етĕрнери сĕт заводĕнче. Вăл продукцие йӳнĕрех йышăнать", – терĕ. Те тĕрĕс калать, те суять – пĕлместпĕр. Май-июль уйăхĕсенче сĕте йӳнетсе çынсен кăмăлне хуçаççĕ. Çулталăкри вăтам хака çулла та тытса тăма ыйтатăп. Сĕт нумай чух ăна йӳнетменнине курса ĕне шутне ӳстерĕç, тен, Пушкăртри Ирина Сандровăпа Римма Ягодкина пек 3-шер ĕне усрĕç. Кăçал Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев килти хуçалăхран сĕт паракансен хӳттине кĕрсе темиçе те сăмах каларĕ. Пĕр вăхăтра хак хăварт ӳсрĕ.



Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăнӳкерчĕкĕ

**Галина ВАСТРЮКОВА, Муркаш районĕ, Ивановка ялĕ:**

– Пĕр ĕне усратăп. Ытлашши сĕте коммерсанта ирхи 5 сехет иртсен хапха умĕнчен парса яратăп. Ăна халĕ иртнĕ çулхинчен йӳнĕрех йышăнать. Çавăнпа продукци туса илекенсем чăркăшаççĕ. Хĕрĕме пулăшмалла пулин те М-7 автоçул хĕрринчи "Автосамант" кафере ĕçленĕ пирки иккĕмĕш ĕне туянма шухăшламастăп. Килти хуçалăхран тупăш нумайрах илекен Пушкинсен, Вастрюковсен – 3-шер, Романовсемпе Ванюшкинсен 2-шер ĕне. Ку уйăхра кашни килограмм сĕте 16 тенкĕлле сутатпăр. Пирĕн ялсенчен чылайăшĕ Мускава, ытти çĕре укçа тума çӳрет. Сĕт е аш килти хуçалăхра вăй хуракан кашни çынна республикăри агропромышленноçра тăрăшакансен уйăхри ĕç укçи /9 уйăхра вăл 12547 тенкĕ терĕç/ чухлĕ шалу илме май парсан инçете шапаша каймĕччĕç, темиçе ĕне тытăччĕç. Республика Пуçлăхĕ çулла сĕт 13 тенкĕрен йӳнĕрех пулмалла мар тени те усса кайрĕ.

**Ольга ВАСИЛЬЕВА, Канаш районĕнчи Янкăлч ял тăрăхĕн пуçлăхĕн çумĕ:**

– Михаил Игнатьев ыйтнине пурнăçласа район администрацийĕнче сĕт пуçтаракансене пухса канашлу ирттернĕ. Çакăн хыççăн хака ӳстерме май килчĕ.

Пĕр ĕне тытатăп. Вăкăра çу каçартăмăр. Коммерсант кашни килограмм сĕте 16 тенкĕлле, иртнĕ çулхи çак тапхăртинчен йӳнĕрех хакпа, пухать. Çуллахипе танлаштарсан вăл хакланчĕ. Ял тăрăхĕнче майракаллă шултра выльăх – 405, вăл шутра ĕне – 270, сысна – 87, сурăхпа качака 390 /путексемсĕр/ пуç. Коммерсантран сĕтĕн çулталăкри вăтам хакне пĕр шайра тытса тăма ыйтатпăр. Анчах продукци сутакансене итлемест, çулла чылай сахалрах тӳлет. Ял тăрăхĕнче пĕр çын çеç пуçтарать. Ку ĕçе тепĕр организацие явăçтарса сутлăх хака ӳстерме палăртатпăр.

**Эльвира РУССКОВА, Янкăлч ял администрацийĕн специалист-эксперчĕ:**

– Ку сĕнĕве ялта пурте ырлаççĕ. Çулла йӳнĕрех, кĕркунне-хĕлле сĕт сахал чух хаклăрах хакпа йышăннине ăнланмастăп. Ĕнене çулталăк тăршшĕпех пĕрешкел пăхатпăр, çитеретпĕр. Хресчене кашни уйăхра пĕр пек услам илме май тăвасчĕ. Вăл хальхинчен тулăхрах пурăнтăр. Манăн килти хуçалăхра – 3 ĕне. Сĕт сутса тăвакан укçа хальлĕхе çемье бюджетне пурпĕр пуянлатаймасть.

**Александр ПЕТРОВ, Канаш районĕнчи Ухман ял тăрăхĕн пуçлăхĕ:**

– Иртнĕ уйăх вĕçĕнче кашни литр сĕт 14 тенкĕччĕ, унтанпа кăштах хакланчĕ. Çулла 11 тенкĕ çеç юлчĕ. Вăл çынсене тивĕçтермерĕ. Сутлăх хака ӳстерес ыйтăва çĕклерĕç. Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев муниципалитетсенчен килти хуçалăхран йышăнакан сĕте хаклатас тĕлĕшпе витĕм кӳме ыйтнине пурнăçласа район администрацийĕнче чăрмава тишкерни нумай пулăшрĕ. Эпĕ продукци пуçтаракан коммерсантпа тĕл пултăм. Вăл сĕте 11 тенкĕлле çеç йышăннине унăн пахалăхĕ начаррипе ăнлантарчĕ. Ыйтăва ĕне усракансемпе сӳтсе яврăмăр. Пахалăха лайăхлатма чĕнсе каларăм. Сĕте 3 хутчен тĕрĕслерĕç. Халĕ килти хуçалăхсем пахарах продукци сутма тăрăшаççĕ.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**

ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ

# Ку – пирĕн тивĕç. Эпир пултармаллах

***Раççей Федерацийĕн уявĕсен кăçалхи календарьне хальхинче нихçанхинчен те ытларах кăсăкланса тишкерсе тухрăм. Сăлтавĕ те тупăнчĕ. Чăннипех, мĕнле кăна уяв çук иккен пирĕн? Сăмахран, акă, январь уйăхĕнче кăна тĕрлĕ пулăмпа çыхăннă 30 куна /ятарласа шутларăм!/ паллă тăватпăр: Çĕнĕ тата Кивĕ çул, РФ прокуратура ĕçченĕсен кунĕ, Раççей тата Чăваш пичечĕн кунĕсем, Студентсен кунĕ тата ытти те. Эпир пĕлменни те сахал мар иккен: çак уйăхрах – ытама илме юратакансен кунĕ, шурă эрех «çуралнă» кун. Ытти уйăхсенче те тĕлĕнмеллисем тупăнчĕç. Май /çу/ уйăхĕнче халăх пĕлекен уявсемпе пĕрлех шифровальщиксем, биографсем, кадровиксем, шурă çӳçлисем, фрилансерсем /кусем тата камсем-ши?/ хăйсен кунĕсене палăртаççĕ. Каçарăр та, çав календарьтех туалет кунĕ пурри пирки те пĕлтернĕ, «19 ноября – всемирный день туалета»...Кĕçех чĕркев /упаковка/ дизайнерĕсем те пĕрпĕрне хăйсен уявĕпе саламлĕç.***

Сăмахăма ахальтен пуçламарăм эпĕ, «Хыпар» хаçата вулаканăм. Ыйту та пур: «Хисеплĕ çыннăм, эсĕ тăван халăхăмăрăн историйĕнчи паллă пĕр-пĕр пулăмпа е унăн сумлă çыннипе çыхăнтарнă чыслав кунĕ пирки мĕн те пулин пĕлетĕн-и?» Ансатрах каласан – авалтан пыракан тĕн, хамăр йăла-йĕркепе çыхăннă уявĕсемсĕр пуçне тата Республика кунĕсĕр пуçне чăваш халăхĕн пĕрле мăнаçланса палăртма йышăннă уявĕ пур-и? Хуравĕ мĕнле пуласси иккĕленмесĕрех уçăмлă, çавăнпа хистесе ыйтмастăп. Шухăшăмпа халăх çине тухиччен хăйне евĕр пĕчĕк ыйтăм ирттертĕм: «Кирлĕ-и пире ун пек уяв тата ăна кампа, мĕнле пулăмпа çыхăнтармалла?» Тĕрлĕ ӳсĕмри çынсен шухăшĕ пурин те пĕр евĕрлĕ: «Паллах, кирлĕ. Чăвашлăхран тухса тĕнчипех палăрнă йăхташ сахал мар пирĕн, анчах вĕсенчен чи малта тăраканни – кăна никам та хирĕçлеме хăяймĕ – нихăçан та манăçми Андриянăмăр!..»

Республикăри космонавтика ветеранĕсен канашĕ икĕ çул каялла Чăваш Кăйкăрĕ пĕрремĕш хут тĕнче уçлăхне çĕкленнĕ куна «Чăваш Республикин космос мухтавĕн кунĕ» евĕр чыслама йышăнса пуçару турĕ. Уява официаллă çирĕплетес тĕллевпе Канаш ятарлă хутсемпе документсене Чăваш Ен Пуçлăхĕн Администрацине, Патшалăх Канашне, министерствăсемпе ведомствăсене çитерчĕ. Влаç тытăмĕнчисем халăх сĕнĕвне шута илес шанăç пурччĕ. Ара, асăннă уяв пирĕн мăнаçлăхпа çыхăннă-çке.

Тĕрлĕ комитет, эксперт канашĕнче ун пек те, кун пек те тишкерчĕç республикăри космонавтика ветеранĕсен канашĕ сĕннĕ проекта. Хирĕçлекен, килĕшмесĕр тăракан пулмарĕ. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн çирĕм тăваттăмĕш сессийĕн кун йĕркине кĕртсе çирĕплетсен канаш членĕсем «тинех!» тенĕччĕ. Шел, шаннă кайăк йăвара пулман евĕр килсе тухрĕ. Çав кун таталмарĕ ыйту. Шанатпăр: шăпи телейлĕ пулатех! Мĕншĕн тесен санпа маншăн мар вăл уяв. Тăван халăхăмăрăн наци уявĕн календарĕнче пулма тивĕç вăл. Раççейри уявсен календарĕнче мĕнли кăна çук та. Сумлисемпе юнашарах – тĕлĕнмеллисем те, тĕлĕнтерекеннисем те. Хамăр республикăра вара мăнаç уявне те йĕркеллĕ йышăнса çирĕплетейместпĕр.

Андриян Николаев космонавтпа пĕр хут çеç мар тĕл пулса /Байконурта хĕсметре тăнă чухне те, каярахпа та – çуралнă кĕтесе таврăнсан та/ калаçма тӳр килнишĕн шăпана яланах тав тăватăп. Журналист пулнă май космос теми маншăн çав тери çывăх. Тĕнче уçлăхне икĕ хут тухса çăлтăрсемпе чăвашла пупленĕ Андриян Григорьевич ансат та çывăх, уçă çынччĕ. Хăйĕн чун ăшшине пурне те парнелеме, йывăр самантра пулăшма тăрăшнине кашни çын туйса тăратчĕ. Андриянăмăрăн çăлтăрĕ чăннипех ан сӳнтĕр, вăл килес ăрусен чĕринче те мăнаçлăх туйăмĕ вăраттăр, Чăваш Кăйкăрĕн паттăрлăхĕ ан манăçтăр, тăван халăхĕ сывă чухне вăл ялан асра пултăр – çакă, хисеплĕ вулаканăм, пĕтĕмпех пирĕнтен килет. Çав шутра – эпир сĕнекен уяв шăпи те. Ку – пирĕн тивĕç. Эпир пултармаллах!

■ **Юрий СТЕПАНОВ,**
**республикăри космонавтика ветеранĕсен канашĕн членĕ**

**Василий ПРОКОПЬЕВ, отставкăри подполковник, «Байконур» космодром ветеранĕ /Патăрьел районĕ, Пăлапуç Нурăс ялĕ/:**



– Хĕсмет вăхăтне кунта ирттерме тивнишĕн мăнаçланатăп та. Мĕншĕн тесен космодромра службăра тăма лайăххисенчен чи лайăххисене суйласа илни никамшăн та вăрттăнлăх мар. 1967 çулхи апрель уйăхĕнче Казахстан пуш хирĕнчи полигона çитрĕм, сăнавçă пулнă май Н-1 ракетăсене тĕнче уçлăхне кăларма хатĕрленĕ çĕре, каярахпа вĕсене вĕçтерме хутшăнтăм. Асăннă программа космонавта Уйăх çине вĕçтерессипе тата инçе çулран каялла таврăссипе çыхăннăччĕ. Каярахпа «Экран», «Радуга», «Горизонт», «Гейзер», «Альтаир» космос аппарачĕсене сăнанă, планетăсен хушшинчи «Венера» автоматла 6 станцие вĕçеве хатĕрленĕ.

Манăн шухăшăмпа – республикăн, чăваш халăхĕн «Чăваш Енĕн космос мухтавĕн кунĕ» пулмаллах. Пирĕн республикăран виçĕ космонавт тухнă, «Байконур», «Плесецк» космодромсенче тĕнче уçлăхĕн карапĕсене вĕçеве хатĕрленĕ вун-вун ентеш хĕсметре тăнă, офицерпа прапорщик, салтакпа сержант космодромсенче çар тивĕçне пурнăçланă.

**Валериан ПЕТРОВ, /Элĕк районĕ, Мăн Вылă ялĕ/:**



– Эпир, хăй вăхăтĕнче çар тивĕçне «Байконур» космодромра пурнăçланисем, кашни çулах августăн 11-мĕшне, мухтавлă ентешĕмĕр Андриян Григорьевич пĕрремĕш хут тĕнче уçлăхне тухнă кун, «Чăваш Республикин космос мухтавĕн кунĕ» уяв евĕр ирттерме йышăннине ырлатпăр.

Космос карапне тĕнче уçлăхне вĕçтерме хатĕрленĕ тапхăрта старт площадкинче ыттисемпе пĕрлех чăваш çĕрĕ çинче çуралса ӳснĕ офицерсемпе сержантсем, салтаксем тăрăшаççĕ. Пирĕн республикăран виçĕ космонавт тухнине шута илсен – асăннă уяв кирлех. Ăна официаллă йĕркепех йышăнмалла. Уява ирттерме-палăртма республика бюджетĕнчен пĕр пус та тăкакланмасть. Ӳсекен ăрăва патриот воспитанийĕ панă чухне вара питĕ пĕлтерĕшлĕ.

**Алексей АЛБУТОВ, Космонавтика ветеранĕсен республикăри пĕрлĕхĕн канашĕн ертӳçин çумĕ, рядовой /Елчĕк районĕ, Чăваш Тăрăм ялĕ/:**



– Енчен те çак уява çирĕплетсен /çапла пуласса эпĕ нимĕн чухлĕ те иккĕленместĕп/ чăваш ятне çăлтăрсем таран çĕкленĕ сумлă тата вилĕмсĕр Андриянăмăрăн паттăрлăхне тивĕçлипех хаклани пулĕччĕ. Вăл та кăна мар: хамăрăн Николай Бударинпа Муса Манаров космонавтсене, космодромсенче çар тивĕçне чыслăн пурнăçланă ентешсене хисеплени те. Пирĕнтен хăшĕ-пĕри, çав шутра – пысăк вырăн йышăнакан тӳрешара та, «Раççейре ахаль те космонавтикăпа авиаци кунĕ» пур вĕт-ха, пире пĕр евĕрлĕ икĕ уяв кирлĕ-и?» теме пăхаççĕ. Икĕ уяв хушшинче нимĕнле пĕрпеклĕх те çук. «Чăваш Республикин космос мухтавĕн кунĕ» – пирĕн кăна, чăваш халăхĕн наци уявĕ.

Космонавтика ветеранĕсен республикăри канашĕ сĕннипе уява çирĕплетессин, ăна малашне йĕркелесе ирттерессин пĕтĕм йывăрлăхне хам çине илтĕм. Юлташсем пулăшса пынипе ăна вĕçне çитеретпĕрех. Ку пирĕн – çирĕп тĕллев.

**Юрий МОСОЛОВ, отставкăри подполковник, «Байконур» космодром ветеранĕ /Сĕнтĕрвăрри районĕ, Малти Пукаш ялĕ/:**



– 1979-1992 çулсенче кунта хĕсметре тăтăм. Асра юлни – «Буран-Энергия» старт комплексне туни тата пĕрремĕш космонавтсем тĕнче уçлăхне ăсаннă старт площадкине тĕпрен çĕнетсе юсани. Ытти халăх çыннисемпе пĕрлех ентешсем те йышлăччĕ. Кашнинех хăйĕн тивĕçне чыслăн пурнăçланă. Чăвашсем пирки уйрăмах ырăпа калаçатчĕç. Апла тăк космоса вĕçессипе те, унта вĕçме хатĕрлессипе те эпир маттур пулнă. Августăн 11-мĕшĕнче «Чăваш Республикин космос мухтавĕн кунне» палăртмалла тусан, манăн шухăшăмпа, ку – тĕрĕс тата вăхăтлă йышăну. Çамрăк ăрăва патриот воспитанийĕ парас ĕçре те питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ.

# Штраф – 10 млн тенкĕ!

***Республикăра взяткăшăн çакнашкал пысăк виçеллĕ штраф палăртни халĕччен пулнăччĕ-ши? Калама хĕн. Шупашкарти Калинин районĕн сучĕ çавăн пек вердикт йышăннă.***

Суд умне тĕп хулари пĕрремĕш клиника больницин профпатологи центрĕн экс-заведующийĕ, пĕрлех çак сиплев учрежденийĕн поликлиникин заведующийĕнче ĕçленĕскер, тăнă. Хĕрарăма УК 290 статйипе пăхнă преступленисен тăхăр тĕслĕхĕшĕн айăпланă. Сăмах взятка пирки пырать. Ăна 8 çуллăха условнăй майпа ирĕклĕхсĕр хăварнă, 10 млн тенкĕлĕх штрафланă. Çийĕнчен унăн 3 çул сывлăх сыхлавĕн сферинче ертӳçĕсен должноçĕсенче ĕçлеме юрамасть.

Следстви комитечĕн Шупашкарти пайĕ тата суд çирĕплетнĕ тăрăх – заведующи хăйне пăхăнса тăракансенчен 630 пин тенкĕ ытла взятка ыйтнă. Медиксене хавхалантарса тӳлекен укçана куç хывнă. Памасан ĕçрен хăтарассипе сехĕрлентернĕ. Ĕçлес килет вĕт – тӳлеме тивнĕ.

**К.НИКОЛАЕВ.**

# Тăлăха каять...

***Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ çапларах шухăшласа илнĕ пулас та – ача çуртĕнче çитĕннĕ 19 çулти тăлăх хĕре пурăнма юрăхсăр çуртпа тивĕçтернĕ.***

Халĕ вăл пуçлăх мар ĕнтĕ, анчах ку яваплăхран хăтармасть. Преступление Етĕрне полицийĕн экономика хăрушсăрлăхĕн уйрăмĕн оперативникĕсем тăрă шыв çине кăларнă. Следстви версийĕпе килĕшӳллĕн Элĕк районĕнчи ял тăрăхĕн пуçлăхĕ туса пĕтермен çурт туянса 2010 çулхи çуркунне ăна тăлăх хĕре панă. Чиновник çак пӳрте пурăнмалли çурт-йĕр объекчĕсен шутне кĕртсе тивĕçлĕ документсене илме те пултарнă.

Пӳрт пурăнма юрăхсăр пулнă: чӳречесĕр, ăшă та, электричество та çук. Документсене ĕненес тĕк ял тăрăхĕн администрацийĕ çурта 280 пин тенке яхăн тӳлесе туяннă – çăмăллăхлă çынсене социаллă çурт-йĕрпе тивĕçтермешкĕн 2008 çулта шăпах çавăн чухлĕ уйăрнă. Чăннипе вара пӳрт 100 пин тенкĕрен ытла тăман.

Ял тăрăхĕн экс-пуçлăхĕ тĕлĕшпе должноç полномочийĕсемпе киревсĕр тĕллевпе усă курнăшăн тата службăри ултавшăн уголовлă ĕç пуçарнă. Следстви пырать.

**К.АНТОНОВ.**

